24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ОКТЯБРЬ 29 ЮНКУН 255 (5970) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Октябрь уявне фронта пулăшу парассине вăйлатнипе кĕтсе илер

Енер Совет Информаци Бюровĕ пирĕн çĕршывăн предприятийĕсенче, колхозсемпе совхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту çавтери анлăн сарăлни çинчен пĕлтерчĕ. Çак ăмăрту «Октябрь уявне фронта пулăшу парассине вăйлатнипе кĕтсе илер!» текен патриотла лозунга пурнăçа кĕртес енĕпе пулса пырать.

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем Октябрĕн чăлăх праздникĕсене кашни çулах тăван çĕршыва парнесем кӳнипе уявланă. Производствăллă çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе эпир хамăрăн тăван çĕршыва тĕреклетсе, ăна илемлетсе пынă. Эпир мĕн тума пултарнă, эпир мĕне тытса тăратпăр,—çавсен умне халĕ ĕнтĕ хаяр хăрушлăх тухса тăчĕ. Пирĕн çĕршывăн ĕçсыннийĕсем Октябрьте тунă аслă çĕнтерӳсене гитлерла сĕмсĕр йыткăтĕвĕ туртса илеспĕн. Фашистла захватчиксем вăхăтлăха йышăннă, çаратса пĕтернĕ тата асап кăтартнă çĕрсем çинче миллионшар совет çыннисем фашистла атă айĕнче йынăшаççĕ.

Тăшман Мускав патнелле хирĕнсе пырать. Вăл çырмари пек юхакан юнпа пирĕн столицăна, унăн урамĕсемпе площачĕсене тултарса лартаспăн; пĕтĕм халăх праздникĕсен кунĕсенче çав урамсем тăрăх савăнăçлă çынсен юхăмĕ Хĕрлĕ площаде, Кремль патне, аслă Ленинăн мавзолейĕ патне пынă. Анчах тăшман хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртеймĕ. Фашистла çăхан хĕвел пайăркисене хупласа лартма, Кремль çăлтăрĕсен ĕмĕр сӳнми, суттине сӳнтерме пултараймĕ. Мускав патне пымалли инçетри вырăнсенче, Крым алăкĕ патĕнче, Ростов хӳмисем патĕнче, Донбасс çулĕрĕсем çинче пыракан йывăр çапăçусенче Хĕрлĕ Çар Октябрьти социализмлă революци çĕнсе илнисене хӳтлет, тăван çĕршывăн ирĕклĕхне, тыслăхне тата никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварассипĕн кĕрешет. Темĕнле жертвăсем те, темĕнле йывăрлăхсемпе çухатусем те фашистла йытăсене-пусмăрçăсене хирĕç кĕрешессинче пире чарма пултараймаççĕ. Хĕрлĕ Çара пулăшма мĕнпур халăх, мĕнпур çĕршыв тухать.

Пирĕнтен уйăрăлса, аслă Ленин пире хамăрăн ирĕклĕхе, хамăрăн халăх пурнăçа тата пуласлăха хӳтлекен Хĕрлĕ Çара тĕреклетме хушса хăварнă. Эпир пурте Ленин вилнĕ хыççăн аслă Сталин сăмахĕпе тупа тунине асра тытатпăр: «Тупа тăвар ĕнтĕ, юлташсем, пирĕн Хĕрлĕ Çара, пирĕн Хĕрлĕ флота тĕреклетме эпир вăйсене хĕрхенместпĕр тесе». Халĕ ĕнтĕ тăшмана тытса чарма, ăна çĕнтермешкĕн тата пирĕн çĕршывăн хăваласа кăларма-кăн хамăрăн мĕнпур вăйсене, хамăрăн мĕнпур энергине, хамăрăн мĕнпур пултарулăхсене, пĕлӳсене фронта пулăшма, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пулăшма ним шеллемесĕр памалли саманта çитрĕ.

Фронта пулăшни вăл—самолетсем, танксем, тупăсем, вăл—хĕçпăшал тата боеприпассем. Ленинградри заводра расточник Новиков 24 сехет хушшинче пилĕк нормăна яхăн тунă, токарь Полубояринов кашни сменăра тăваттăр норма парать. Новиков тата Полубояринов çар заказĕсене туса пыраççĕ. Пирĕн çĕршер пин тата миллионшар рабочисемпе работницăсем Новиковпа Полубояринов тăвакан заказсенех туса тăраççĕ. Кашниех çак Ленинградри геройсем-стахановецсем пек ĕçлесе пырсан, Хĕрлĕ Çар хĕçпăшал тата боеприпассем темиçе хут нумайрах илет. Çавăнпа рабочисемпе работницăсем пурте нормăсене массăллăн иртерсе тултарни—тăван çĕршыва Октябрьти революци 24 çул тултарнă кун пана чи лайăх парне пулса тăрать.

Фронта пулăшни вăл—Хĕрлĕ Çара тата пĕтĕм халăха апат-çимĕç, çăкăр, аш-какай нумайрах пани. Мари АССР-ри Оршанск районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем, государство умĕнчи обязательствăсене пурне те тултарса, Хĕрлĕ Çар валли апат-çимĕç резервисен фондне хывма тытăннă. Нумай пиншер колхозсем тытăнса, оборона фондне тырă, аш-какай, çăм параççĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту ялсенче çак лозунгпа пулса пырать: Аслă Октябрь 24 çул тултарнине государство умĕнчи обязательствăсене пурне те тултарнипе кĕтсе илер, çĕршыва ытларах апат-çимĕç парар, çапла вара тăшмана çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Фронта пулăшни вăл—Хĕрлĕ Çара валли тата ăна пулăшса тăракан тыл валли грузсене хăвăртрах çӳретни. Караганда чугунçулĕ çинче çĕркăмăркĕ тиенĕ поездсем курьерла поезд хăвăртлăхĕпе çӳреççĕ. Фронт сывăхĕнчи чугунçулсем çинчи железнодорожниксем артиллирипе персе тăнин вут-хĕмĕ айĕнче çӳресе, фронта хĕçпăшалсемпе боеприпассем илсе пыраççĕ. Кашни железнодорожник фронт сывăхĕнчи железнодорожниксем пек хăйне шеллемесĕр ĕлкесен, Хĕрлĕ Çар хăйĕн кирлине пĕтĕмпех кирлĕ таран тата кирлĕ вăхăтра илсе тăрĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă железнодорожниксем тăван çĕршыва паная чи лайăх парне вăл—хĕçпăшалсемпе боеприпассене, кăмăрăпа метала, нефтьпе çăкăра, чĕртаварпа продуктсене хăвăрт турттарни, тылпа фронт сыхăнса тăрассине пĕр тикĕс туса пыни пулса тăрать.

Нумай пиншер заводсемпе фабрикăсем, колхозсемпе совхозсем Октябрь уявне производствăллă плансене срокчен тултарнипе кĕтсе илеççĕ. Çакă вăл питĕ лайăх. Анчах государство заданийĕсене пурнăçа кĕртсе пыраймăн, хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек çĕнетмен предприятисем те пур-ха. Оборудованисемпе пĕтĕм мощноçпех мар усă куракан, ĕçе начар организациленĕ, рабочисен пĕр пайĕ нормăсене тултарса пыман предприятисем те пур-ха, вĕсем сахал мар. Аван çапасси, пахча-çимĕçсене пухса кĕртесси, вылăх-чĕрлĕх хуçалăхĕсене хĕле кĕме хатĕрлесси вăрахăн пулса пыракан колхозсемпе совхозсем пур-ха. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура пирĕн кая юлса пыракан предприятисемпе хуçалăхсем пулмалла мар, Октябрьти революци 24 çул тултарнă кун кашни ĕççынни: епĕ хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара валли мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тăватăп, тăван çĕршыв валли мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тăватăп, тесе калама пултартăр.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă юлташсем! Фронта валли ытăнма пĕлмесĕр, кунĕн-çĕрĕн хĕçпăшал туптаса хатĕрлĕр, чугунпа хурçă, пăхăрпа алюминий туса кăларассине ӳстерĕр, нефть, руда, кăмăрăк кăларассине ӳстерĕр. Çĕршывăн апат-çимĕç ресурсĕсене пысăклатăр, техника мĕн пама пултарать, ăна пĕтĕмпех сăрхăнтарса илĕр, ĕç тухăçлăхне хăпартса пырăр. Хĕрлĕ Çарăн тата мĕнпур халăхăн пĕрлешӳллĕ вăйĕсемпе эпир тăшмана тытса чараттăр, ăна çул памастпăр тата фашистла çĕленкалтасене пĕтерсе тăкатпăр.

(«ПРАВДА» умтатьи, октябрĕн 28-мĕш).

Коммунистсен районри пухăвĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Октябрĕн 25-мĕшĕнче районри коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн саккăрмĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен Обкомăн вăрман ĕç отделĕн заведующийĕ Тимофеев юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх 15 çын тухса каларĕç. Докладчиксемпе тухса калакансем вăрçă вăхăтĕнче партиллĕ-массăллă ĕçе вăйлатма кирлине палăртрĕç.

Юлашки вăхăтра малта пыракан активистсем парти ретне кĕнĕ. ВКП(б) членĕн кандидатне И. А. Григорьев кĕнĕ, вăл общественник, комсомолец, халĕ вăл Хĕрлĕ Çара кайрĕ. Çавнашкалах Сĕнтĕрвăрринчи судоверфьра ĕçлекен рабочи Александров парти членне кĕнĕ. Вăл рядовой рабочи пулса ĕçленĕ вăхăтра плана 150 процентран кая мар тултарса пынă. Халĕ вăл цех начальникĕ пулса ĕçлет. Бандин, белофинсене хирĕç çапăçнăскер, партне кĕнĕ.

Кунта пĕрлех тухса калакансем районри парторганизацин ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕç. Сăмахран, юлашки вăхăтра докладсем, лекцисем, актива пухса ăнлантарасси начар пулса пынă, уйрăмах колхозри активпа ĕçлесси начарланнă. Ку тĕлĕпрен Сĕнтĕрвăрри хула Совечĕ çуменчи парторганизаци хăйĕн ĕçне ытла та çитĕлĕксĕр туса пынă.

Докладчик тата тухса калакансем партиллĕ-политикăллă ĕçри çитменлĕхсене хăвăртах пĕтерме, политикăллă ĕçе хуçалăхлă ĕçпе тачă çыхăнтарса туса пыма кирлине кăтартса пачĕç.

Çар ĕçне тимлĕн вĕренеççĕ

ШАХАСАН. Октябрĕн 17-мĕшĕнче Ямашри вĕренӳ пунктĕнче çар ĕçне вĕренме пуçтарăннă иккĕмĕш сменăн боецĕсемпе командирĕсен пухăвĕ пулчĕ. Çар ĕçне вĕренес задачăсем çинчен доклад итленĕ хыççăн боецсемпе командирсем, «отличнăо» палла илмелле вĕренме обязательствăсем илсе, социализмлă ăмăрту договорĕсем турĕç. Пĕрремĕш взвод иккĕмĕш взводпа ăмăртатъ, отделенисем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Пĕрремĕш взводри 2-мĕш отделенин боецĕ Петр Васильев:

— Эпĕ çар ĕçне, çар техникине пур дисциплинăсем тăрăх та «отлично» ран кая мар вĕренме пулатăп, — терĕ.

Командирсем хăйсене шанса панă боецсене лайăх вĕрентме пулчĕç.

Çак пухурах стена хаçачĕ кăларма йышăннă. Унăн редколлегине уйăрнă. Кашни взводрах политтецсем пулаççĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Срокчен тултаратпăр

Пирĕн цехри рабочисемпе работницăсем хушшинче ĕç нормине тултарса пырайманнисем пĕр çын та çук. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнăранпа двухсотниксен йышĕ кулленех ӳссе пырать. Тимĕрçи тата токарнăй отделенинче ĕçлекенсенчен нумайĕшĕ двухсотниксен ретне тăма тивĕçлĕ пулчĕç. Веселкин, Гришин, Шишкин тата Циглер юлташсем нормăна икĕ хут ытла иртерсе тултараççĕ.

Нумалăх та пулмасть токарь Корнеев юлташа ответлă задани пачĕç. Хастарлă стахановец нормăна 275 процент тултарса, ĕçе хăвăрт туса пĕтерчĕ.

Пирĕн цех коллективĕ Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан заводри рабочисем чĕнсе каланине сӳтсеявнă хыççăн хăй çине çулталăк плансене декабрĕн 23-мĕш тĕлне тултарма обязательство илчĕ.

А. МИЛОРАДОВСКИЙ.
Çĕмĕрлери древкомбинатăн цех мастерĕ.

Шкулсен ăмăртăвĕ

ÇĔРПУ. Районри шкулсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Шкулсем ачасене пурне те шкула тĕрĕс-тĕкеллĕн сӳретессишĕн, вĕренӳ пахалăхĕ ӳстересси-шĕн, оборона ĕçне вăйлатассишĕн, колхозсенче массăллă-агитациллĕ ĕçе йĕркеллĕн туса пырассишĕн, колхозсене производство ĕçĕнче пулăшассишĕн ăмăртаççĕ.

Топнерти туллимар вăтам шкулта социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн вĕренӳ пахалăхĕ чылай ӳсни сисĕнет, ачасем шкула пĕр сиктермесĕр сӳреççĕ. Вĕренекенсем оборона ĕçĕпе питех те интересленеççĕ. Юлашки кунсенче ПВХО ĕçне вĕренсе, 86 ача значокĕсем илме нормăсем панă. Шкулта самозащита группине организацинленĕ.

Шкулти учительсем ĕççыннисем хушшинчи массăллă-агитациллĕ ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Юлашки вăхăтра агитатор-учительсем—колхозниксем хушшинче 8 калаçу туса ирттернĕ. Вĕсем колхозниксене хальхи вăхăтра тăван çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчере пулса иртекен пысăк событисемпе, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе, отечественнăй аслă вăрçăн боевой эпизочĕсемпе паллаштараççĕ. Çак ĕçе вĕсем Хĕрлĕ Çара колхозниксем енчен пулăшу парас ĕçпе çыхăнтараççĕ. Вĕсемех Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă ярасем пухас ĕçе те пуçарса пыраççĕ.

Çавăн пекех, Йĕкĕрвар, Чурачăк, Старак вăтам шкулĕсенче, Паваркассинчи, Патăрьелĕнчи туллимар вăтам шкулсенче те ĕçсем чылай лайăхланни сисĕнет.

Районри шкулсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXIV çул тултарнине вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕке ăнăçлăн вĕçленипе, физкультурăпа оборона ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

С. ПЕТРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Можайск, Мало-Ярославец, Харьков тата Таганрог енĕсенче противника хирĕç çапăçнă.

Тĕплĕн палăртнă тăрăх, октябрĕн 25-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан хăтартнă пек 27 самолет мар, 39 самолет пĕтерсе тăкнă.

Октябрĕн 27-мĕшĕнче Мускав патĕнче противника 8 самолет персе ӳкернĕ.

* * *

Гитлерла çарти салтаксен физически тата моралльĕ состоянийĕ вăйлăн начарланни

Юлашки 20 кун хушшинче нимĕçсен фашистла çарĕнчи салтаксен моралльĕ состоянийĕ малалла вăйлăн начарланса пычĕ. Нимĕçсен тыткăна лекнĕ салтакĕсем нумайĕшĕ фашистла войскăсем çĕнтерессине пачах ĕненменнине кăтартса параççĕ. Нимĕçсен тыткăна лекнĕ салтакĕсем каленă тăрăх, гитлерла çарти салтаксен моралльĕ тата физически вăйĕсем пĕтсе çитнĕ. Халĕ тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсен сăнĕ вăрçăн малтанхи эрнисенче тыткăна илнĕ салтаксен сăнĕнчен пачах уйăрăлса тăрать. Тыткăна илнисем пурте питех те пыйтланса кайнă, пĕрмаях хыскаланаççĕ, хăйсем çинчен паразитсене иле-иле пăрахаççĕ. Нимĕçсен тыткăна лекнĕ салтакĕсенчен нумайĕшĕн сăнĕсем вĕсем юханса тата ывăнса çитнине кăтартса параççĕ. Нимĕçсем чылайĕшĕ çĕтĕк-çатăк тумтир тăхăннă тата аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕмсĕрех çӳреççĕ. Нимĕçсен командованийĕ хăйĕн салтакĕсене çапăçăва эрех ĕçтерсе ӳсĕртнипе илсе кĕресси яланхи йăла пулса тăчĕ.

Юлашки вăхăтра тыткăна лекнĕ фашистла салтаксем хушшинче сывлăх енчен пысăк çитменлĕх пур çынсем: ачаранах хăрах куçлă пулнисем, куçлăхсăр пачах курман çынсем, ура çĕрнĕ пирки темиçе хут операци тунинчен уксахланса юлнă çынсем тата ытти çавăн пек çитменлĕхлĕ çынсем нумай тĕл пулаççĕ. Тыткăна лекнисем каласа панă тăрăх, халĕ Германи çарне 17 çулран пуçласа 50 çула çитнисене пурне те илнĕ, сывлăх енчен çитменлĕх пулнă пирки ĕлĕк нихăçан та çара илмен çынсене те халĕ Германи çарне илеççĕ.

* * *

Германи военщини пĕтĕм тĕнчери правăна тискеррĕн пăсни

Германи çарĕнче çынсем питех те çителĕксĕр пулнă пирки, гитлеровецсем 1907 çулта Гаагăра военнопленнăйсем çинчен йышăннă конвенцине, мĕнпур аслă державăсем, вăл шутрах Германи те, алă пуснă конвенцине тискеррĕн пăсма тытăннă. Гаагăра йышăннă конвенцин 2-мĕш сыпăкĕнчи 6-мĕш статья кăтартса панă тăрăх, тыткăна лекнĕ салтаксемпе вăрçă ĕçĕсемпе мĕнле те пулин çыхăнса тăракан ĕçсенче усă курма юрамасть. Апла пулин те, нимĕçсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене, персе вĕлересси-пе хăратса, фашистла çаршăн ĕçлеттересçĕ. Гитлеровецсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене лавăççем вырăнĕнче, боеприпассемпе ытти çар хатĕрĕсене фронта турттаракан автомашинăсемпе тракторсен шоферĕсем вырăнĕнче, огневой позицисем патне боеприпассем йăтса пыракансем вырăнĕнче тата ытти çĕрте ĕçлеттерсе усă курасçĕ. Çапла туса Германи военщини хăй пусмăрçăсен банди пулса тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче тепĕр хут тăрă шыв çине кăларать, çав пусмăрçăсемшĕн нимĕнле законсем те тата пĕтĕм тĕнчери нимĕнле правăсем те çук, военнопленнăйсен прависемпе положенине палăртса паракан пĕтĕм тĕнчери килĕшӳсем çине Германи представителĕсем алă пуснине вĕсем нимĕн вырăнне те хумаççĕ

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн соединени нимĕçсен 80 танкĕсен икĕ атакине ăнăçлăн сирсе янă. Танка хирĕç кĕрешмелли пур майсемпе те пултарулăн усă курса, соединени боецĕсем тăшманăн 42 машинине пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй установкăсенчен персе тата пирĕн самолетсем пулăшнипе, тăшман танкĕсен колоннине атака тума пуçăнма хăтланнă 8 самолета персе ӳкернĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн чаçсем икĕ кун хушши пыннă кĕрешӳре хамăрăн позицисене атакăлама хăтланакан нимĕçсен фашистла войскисене пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн оборонăн линийĕ патне пымалли вырăнсенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 700 çынна çити вилсе юлнă. Пирĕн оборонăна шăтарса кĕнĕ фашистла войскăсен уйăрăм групписене çавăрса илнĕ те пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чаçсем 5 танк, 9 оруди, 20 миномет, 60 автомат тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Октябрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

* * *

Фронтăн Можайск енче пирĕн чаçсем нимĕç салтакĕсен нумай йышлă ушкăнне тыткăна илнĕ. Вĕсен показанийĕсем фашистсен салтакĕсен пысăк пайĕн шухăш-кăмăлĕсене кăтартса параççĕ. Иохим Этингоф салтак çапла каласа парать: «Татти-сыпписĕр пыракан хаяр çапăçусем мана тертлентерсе çитерсе халран ӳкерчĕç. Манăн хал пĕтрĕ. Маншăн пулсан халь кирек-мĕн пулсан та пурпĕрех. Мана хăваласçĕ, эпĕ пĕчĕк ачасем вылямалли салтак пек каятăп. Аçта тата мĕншĕн каятăп — хам та пĕлместĕп. Умра нимĕнле тĕллев те çук. Пуç нимĕн çинчен те шухăтлама пултараймасть. Мĕнпур иртнĕ пурнăç нихăçан тавăрăнми пĕтрĕ, тата путрĕ. Тепĕр чухне темĕнле урăх пурнăç пулĕи çинчен ĕненес те килместь. Офицерсем тата пропаганда роти салтаксене хавхалантарма, вĕсен çапăçури хастарлăхне çĕкленме мĕнпур вăйран тăрăшаççĕ. Пире сӳрĕх те халсăр пулни — салтакăн чи хăрушă тăшманĕсем тесе вĕрентетчĕç. Пире кулленкун ӳкĕтлетчĕç, ӳшкелетчĕç, анчах çапăçу пек ӳкĕтленисем вĕсем сулкăн та ют сăмахсем пулнă, вĕсем салтаксен тĕрисене нимĕн чухлĕ те хускатмаç».

Тыткăна лекнĕ Эмиль Грин çапла пĕлтерет: «Сĕнĕ наступлени пуçланнă малтанхи кунран тытăнсах салтаксем нумайĕшĕсем шăпи тулнă çынсем пек сӳреççĕ. Манăн яланах çавăн пек туйăм — эпĕ темĕнле тĕпсĕр шăтăка вăркăнатăп пек. Офицерсем пачах ăсран кайрĕç, тискерленсе çитрĕç. Вĕсем каласмаççĕ, мĕкĕреççĕ кăка. Сивĕсем, юр çуни туйтарма та пуçларĕç ĕнтĕ. Чаçсенче чирлисем нумай, анчах та офицерсем нимĕнле чире те йышăнмаççĕ, чирлĕ, ураран ӳкекен салтаксенех çапăçăва хăвалаççĕ. Офицерсем хастарланнă пек пулаççĕ, анчах вĕсем чăрăнса ларма лекес куна пĕтĕм чунĕсенчен кĕтсе тăраççĕ пек туйăнать мана. Мĕкпур салтаксене куллен йĕрлесе пыракан — мĕн пулĕ-ха малалла? текен ыйтуран офицерсем вут-кăвартан хăранă пекех хăраççĕ».

Тыткăна лекнĕ Ганс Брейт çапла калать: «Салтаксем ĕнтĕ вăрçă часах пĕтессине пачах та шанми пулчĕç. Питĕ нумай салтак вилни тата аманни нервăсене йывăрăн пырса çапать. Çухатусем пирĕнчĕн штаб сводкисенчи тинĕ цифрăсем мар. Эпир кунран-кун ытларах та ытларах салтаксем пытаратпăр».

* * *

Вологда облаçĕнчи ĕççыннисем мĕнпур вăйĕсене хурса ĕçлеççĕ. Предприятисенчен питĕ нумайĕшĕсем Хĕрлĕ Çар валли кирлĕ специальнăй продукци кăларас ĕçе вĕренсе алла илнĕ. «Вологдолес» тресчĕ шпалсем туса кăлармалли çулталăкăх плана тултарнă та ĕнтĕ, октябрь уйăхĕнче çулталăк плавĕнчен иртерсе 14 пин шпал туса кăларнă. Ывăç каскалакан 40-мĕш тата 45-мĕш номерлĕ заводсем продукци туса кăларас ĕçе июль уйăхĕнчипе танлаштарсан икĕ хут ӳстернĕ. Çурçĕр чугунçулĕ хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатнă. Чугунçул çинче вагонсем çине грузсем тиесси сентябрь уйăхĕнче июль уйăхĕнчипе танлаштарсан 50 процент ӳснĕ.

Облаçри предприятисенче рабочисен ĕç тухăçлăхĕ, вăтамран шутласан, планпа палăртнинчен 120 процент ытла ӳснĕ. Слесарь Бобылев юлташ нормăна 190 процент, станочница Демашова юлташ 148 процент тултарса пыраççĕ. Н. Кулойски артельри мастер Ануфриев юлташ пĕр кубометр чĕртавартан планпа палăртнă 6 килограмм вырăнне 11 килограмм скипидар кăларса ĕçлет. Çурçĕр чугунçулĕ çинчи машинист Баженов юлташ поездсем çине нормăпа 1400 тонна тиеме палăртни вырăнне 2000-шер тонна груз тиесе турттарса çӳрет.

Облаçри колхозсемпе совхозсем уйхиртен тырпул пухса кĕртсе çитернĕ. Кĕркри тырăсем акас плана 104,4 процент тултарнă. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче облаçри нумай колхозниксем икĕ çынăн тата виçĕ çынăн ĕçлесе пыраççĕ. Устюг районĕнчи «Передовой» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕ Яков Мишин тимĕрçĕ лаççинче ĕçлет, ферма заведующийĕ пулса ĕçлет тата уйхир ĕçне те хутшăнать.

Облаçра çар ĕçне вĕренессине анлăн туса пыраççĕ. Облаçри 160 пин çын ытла сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнурăн сыхланас ĕçе вĕренсе алла илнĕ. ПВХО инструкторĕсем пулма 8 пин çын ытла вĕрентсе хатĕрленĕ. Облаçри Осоавиахим организацийĕсенче пĕрремĕш тата иккĕмĕш сыпăкри ворошиловла тĕл перекенсене, связистсене, шоферсене, пулеметчиксене темиçе пиншĕрĕн вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Санитарнăй дружинăсенче вĕренсе тухнă хĕрсем 2 пин çын ытла фронта кайнă, вĕсем госпитальсенче тата МПВО пункчĕсенче ĕçлеççĕ. Облаçри ĕççыннисем всевобуч енĕпе çар ĕçне вĕренеççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ÇĔМĔРЛЕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем парас ĕçе хулари учительсем активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем тăван боецсем валли кашниех ăшă тумтирсемпе тĕрлĕрен япаласем панă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем парас ĕçе уйрăмах 2-мĕш номерлĕ шкулта лайăх организациленĕ. Кунти учительсем пĕтĕмпе 16 фуфайка, ватка хурса çĕленĕ 15 брюки, 4 çĕлĕк, 14 минтер пичĕ, 5 ăшă кĕпе, 4 простыня, 9 алшăлли тата алшиш-носкисем чылай панă. Шкул директорĕ Савельев юлташ тăван боецсем валли вата хурса çĕленĕ брюки, фуфайка, простыня, минтер пичĕ тата кальсон пачĕ. Унăн примерĕ тăрăх ытти учительсем те кашниех икшер-виçшер япала пачĕç. Сăмахран, Милорадовская юлташ брюки, простыня, минтер пичĕ, 3 сăмса тутри, Плахотская—фуфайка, простыня, кальсон пачĕç.

3-мĕш номерлĕ шкулта та чылай учительсем 2—3 япала пачĕç. Учительницăсем: Матвеева—2 брюки, пĕр фуфайка тата тепĕр мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, Милонравова—шарф, 2 мăшăр перчатка, простыня тата фуфайка, Егоршина—простыня, кальсон, алшăлли, фуфайка пачĕç. Сырцова юлташăн упăшки Хĕрлĕ Çар ретĕнче. Вăл Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 2 минтер пичĕ, простыня, кĕпе тата фуфайка пачĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем, парнесем пухас ĕçе вĕренекенсем те хутшăннă. 2-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем ку тараннчен Действующи армине яма 179 минтер пичĕ, сăмса тутрисем, алшишсем, алшăллисем чылай пухнă.

Е. МАМАЕВА.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем парасси районра сарăлсах пырать. Уйрăмăнах ку ĕçре комсомол активĕ лайăх пример кăтартать. Комсомолăн Ураковари пуçламăш организацин секретарĕ А. Васильев юлташ боецсем валли чĕр тир, ăшă куртка, пĕр çĕлĕк, Мало-Шигалевăри организацин секретарĕ А. Петрова юлташ пĕр мăшăр çăм чăлха, алшăлли, Анаткассинчи организацин секретарĕ Н. Альгеев юлташ чĕр тир, алшăлли пачĕç. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем парас ĕçе «Портной» артель çуменчи, райсовет исполкомĕ çуменчи, Чучукассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз çуменчи тата М. Яндугановăри комсомол организацийĕсем аван хутшăнчĕç. «Портной» промысла артелĕ çуменчи комсомол организацийĕ, коллектив енчен пысăках мар пулин те, боецсем валли 13 çĕлĕк, 3 мăшăр çăм чăлха, 2 свитер, куртка, пĕр мăшăр алшиш панă.

Комсомолецсем боецсем валли ăшă тумтирсем парас ĕçе активлăн хутшăннипе пĕрлех, колхозсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыраççĕ.

МИКИШ ПАВАЛĔ.

* * *

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Тапăнса çилекен усал тăшмана хирĕç паттăрăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсемпе япаласем пухас ĕç районра сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Октябрĕн 20-мĕш тĕлне районри предприятисем, колхозсем тата учрежденисем 1500 тир, 714 килограмм çăм, 17 кĕрĕк пиншак, 207 фуфайка, вата хурса çĕленĕ 188 шалавар, 661 çĕлĕк, 130 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 303 мăшăр çăматă, 465 мăшăр алшиш, 324 мăшăр чăлхасемпе носкисем т. ыт. ăшă япаласем пухса панă. Пухнă япаласене çийĕнчех фронта ăсатнă, çăмсемпе тирсене тума панă. Ку тараннчен «Авангард» артель 68 мăшăр çăматă йăваланă, Сталин ячĕпе тăракан артель темиçе çĕр тир тунă. Тунă тирсенчен «Индпошив» мастерскойĕ кĕрĕк пиншаксем çĕлет.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе аш-какай комбинатĕнчи рабочисем хушшинче начар мар организациленĕ. Октябрĕн 20-мĕш тĕлне районри склада пурĕ 106 япала иртсе панă. Вĕсен хушшинче 31 мăшăр çăматă, 21 мăшăр алшиш, 22 мăшăр носки, 10 çĕлĕк. Чылай рабочисемпе служащисем 2—3-шер ăшă япала панă. Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе комисси вăхăтăн-вăхăтăн мар, кулленех ĕçлет.

Çав вăхăтрах хăшпĕр комиссисем пĕр пуху, темиçе список тунипех ăшă тумтирсем пухас ĕç вĕçленнĕ теççĕ пулас. Сăмахран, мелькомбинат тата районри çыхăну контори çуменчи комиссисем пĕр пуху туса иртнипех лăпланнă. Хĕрлĕ Çара пулăшма кирли çинчен хальхи вăхăтра нимĕн те шарламаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ку тарана çитсе те мелькомбинатра 4 япала, 400 грамм çăм, çыхăну конторинче 6 япала, 1200 грамм çăм кăна пухнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

☆

Тăшмана хирĕç çирĕппĕн тăраççĕ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, октябрĕн 26-мĕш. Советăн В. хули çине сывлăшран пырса бомбăсем вăйлăн пăрахни çинчен «Правда» хаçатра пĕлтернĕччĕ. Кăтнĕ пекех, сывлăшран пырса тапăнă тата бомбăсем пăрахнă хыççăнах нимĕçсем çав хула çине вăйлă наступлени тума пуçланă. Танксем пулăшса пынипе нимĕç пехоти пирĕн оборонăна нумай хутчен атакăланă. Вĕсене сывлăшран бомбардировщиксемпе истребительсем пулăшса пынă.

Çапах та çак участокра çапăçакан пирĕн стрелковăй часть хăйĕн рубежне сыхласа хăварнă тата тăшмана малалла ямăн. Çак çапăçура нимĕçсенне 40 танк тата 8 самолет персе çĕмĕрнĕ. Çакăн хыççăн кунта нимĕçсем аякран çавăрăнса кайса хупăрласа илме шут тытнă тата наступление каллех танксем нумай кĕртсе янă. Пирĕн артиллери тăшмана пысăк çухату кӳнĕ. Çапăçу сĕм çĕрлечченех пынă. Хăшлĕрялсем темиçе хутчен те алăран алла куçнă.

Пирĕн фронтăн çурçĕр участокĕнче хĕснине пĕрлех, противник хăнтăртан С. хули еннелле вăйлăн тапăнса пынă, анчах иртнĕ талăк хушшинче вăл кунта та çитĕнӳ тăвайман.

Çавăн пекех Можайск тата Малo-Ярославец енĕсенче те çапăçусем пыраççĕ. Эпир паян Нара юханшывĕ çинче противник пехотине хирĕç çапăçакан полксенчен пĕрине пултăмăр. Ирпеле нимĕçсем хытă хĕсме пуçласа, куценчи çырана кăсса кайнă, анчах вĕсене кайран каллех каялла ывăтса янă. Пĕр тĕлте пирĕн пехотинецсем хăйсем Нара шывĕ урлă леш енне кăсса кайнăскĕ. Нимĕçсем юханшывăн тепĕр енчи Т. ялĕнче вырнаçса тăнă. Пирĕн пехота çыран тăрăх выртса тухнă, пехота хыçĕнче 250 метрта вăрман хĕрринче пирĕн наблюдательнăй пункт вырнаçнă, кунта часть командирĕ тата полковой батарейăн командирĕ И. С. Саламатин пулнă. Вăл Т. ялĕнче тăракан тăшман пехоти çине персе тăнă. Расчетсем питĕ тĕл пенĕ. Нимĕçсем Т. ялĕнчен тухса кайнă.

Паян Хĕвеланăç фрончĕн командованийĕ боецсене, командирсене тата политработниксене чĕнсе воззвани кăларнă. «Каялла пĕр утăм та чакма юрамасть. Çакăн пек боевой приказ пачĕ пире, Мускава хӳтлекенсене, тăван çĕршыв»,—тенĕ воззванире. «Пĕр сехет те, пĕр минута та кĕтмесĕр, фашистсене халех чарса лартас пулать тата Мускава хамăран кăкăрсемпе хӳтлес пулать. Ылханлă тăшмана хирĕç е пурнăç е вилĕм тесе кĕрешнĕ сехетре пирĕнтен кашнин пурнăçĕ тăван çĕршыва кăна тивĕçлĕ. Революцилле тивĕçлĕх, воинăн чыслăхĕ, аттесемпе асаттесен боевой мухтавĕ пире пĕччен вуна çынăн çапăçма чĕнеççĕ. Командир приказанийĕсĕр çапăçу хирĕнчен тухса тарса хăйсен тирĕсене çăлса хăваракан хăраçăсене, паникерсене, дезертирсене, предательсемпе тăван çĕршыва сутакансем вырăнне хурса, пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пымалла. Фашистсен танкĕсене хăюллăрах çунтарса пĕтерсе тăкăр. Хĕрлĕ Çар воинĕн законĕ—нимĕç танкĕсенчен хăраса пăрăнса тăмалла мар, пачах урăхла, вĕсене тупса çавăнтах пĕтерсе тăкмалла. Гитлерла бандитсем çине мĕнпур огневой средствăсенчен татах та ытларах пурне те пĕтерекен вут-çулăма тăкăр! Çапăçăва, юлташсем!»

Фронтран тавăрăннă чухне эпир унта подкрепленисем пулса пыракан хамăран чăссене тĕлпултăмăр. Эпир хирĕç тăрасси ӳссех пырать.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. (Хĕвеланăç енĕ). **Укерчĕк çинче:** старший лейтенант Ф. П. Коршунов (сылтăмра) телефон линийĕн трассине разведка туса сăнас тĕлĕшпе боец-связистсем П. Ф. Шимадин тата К. И. Гвоздев умне задача лартать

М. Редкин фотоукерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Вăйлă çапăçусем пыраççĕ

Хăмăр пĕлĕт аялтан шăвать. Кунĕпе тенĕ пекех октябрь уйăхĕнчи витĕр çапакан тата сивĕ çумăр çăвать. Иртнĕ çĕр лăпкă пулчĕ. Октябрĕн 26-мĕшĕнче вара иртен пуçласах орудисемпе минометсен сассисем çĕнĕрен кĕрлеме тытăнчĕç, нимĕçсем пуринчен ытларах шоссесемпе пысăк çулсем тăрăх çапăçса пырса пирĕн оборона çине пырса кĕме шуйттан пекех тапăнаççĕ. Рокоссовский юлташăн чăçĕсене хирĕç нимĕçсем çĕнĕрен пехота тата 120 танк кĕртсе янă. Нимĕç салтакĕсене нумайĕшне пĕтерсе тăкса тата темиçе танка персе çĕмĕрсе, пирĕн чăçсем пĕр участокра пĕтĕмпех йĕркеллĕн каялла чакса оборонăн лайăх рубежне йышăннă.

Пехотинецсем те, артиллеристсем те тата пирĕн танкистсем те малтанхи пекех хастарлă тата пĕлтсе çапăçаççĕ. Тăшмана мĕнле те пулсан ытларах халран ярас, ăна вăйсăр тăратса хăварас, тытса чарас—çакăн пек задача, пирĕн фронтовиксем вара çав задачăна хăйсене шеллемесĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Иртнĕ кун хушшинче Говоров юлташăн чăçĕсем противникăн атакисене сирсе ячĕç кăна мар, вĕсем тата чылай пунктсенче противника каялла чакарчĕç. Çапăçу пынă хушăра противникăн орудине персе тивретнĕ те пĕтерсе тăкнă, салтаксене тыткăна илнĕ тата хаклă документсем тупнă. Трофейĕсене шута илсе çитерĕймен-ха.

Кăнтăр еннерех Совет Союз Геройĕн Лизюков юлташăн чăçĕсем Н. хулин тулашĕнче вăйлă çапăçусене малалла туса пынă. Нимĕçсем кунта çĕнĕ вăйсем илсе пынă тата оборона сооруженийĕсем тунă. Тăшман тактикин паллă уйăмлăхне—малалла куçсан сийĕнчех вăл оборона сооруженийĕсем тунине, танксене хирĕçле оборона тунине асăрхаттарас пулать. Паллах ĕнтĕ, тăшмана оборона сооруженийĕсем тума парас мар тесен пирĕн енчен мерăсем йышăнни кирлĕ. Пирĕн командирсен çакна шута илес пулать.

Уйăмах хаяр çапăçусем Мало-Ярославец енче пулса пынă. Пирĕн чăссем противник атакисене сирсе янă тата, наступление куçса, нимĕçсене каялла чакарнă. Эрастов юлташăн чăçĕсем хаттарăн çапăçнă. Кăнтăрла иртсен нимĕçсем пĕр полк чухлĕ вăйпа контратака тума тытăннă. Ана сирсе янă.

Хĕвеланăç фрончĕн сулахай енчи участокĕнче кунĕпех вăйлă çапăçусем пынă. Нимĕçсем çине тăрса атака тума тытăнса пăхнă. Атакăсене сирсе янă. Çанталăк япăх тăнă пирки пирĕн авиаци разведка тума кăна вĕрнĕ.

Хупăрласа илнĕ çĕрте пулнă пирĕн юлташсем нимĕçсен тылĕнчен туха-туха пыраççĕ. «Хупăрласа илнĕ» тени çине фронтовиксем çакăн пек пăхасси йăла пулса тăчĕ: нимĕçсен тылĕнчен пăшалсăр, пĕчченшерĕн тухакан çынсене фронтовиксем йĕрĕнсе тата мăшкăласа кĕтсе илеççĕ,—боецсем мар, хăйсен пурнăçне çăлнă çынсем, теççĕ вĕсене. Генерал-лейтенант Болдин тата ытти командирсемпе комиссарсем хăйсен чăçĕсемпе пĕрле хупăрласа илнĕ çĕртен мĕнле паттăрăн çапăçса тухни пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Паян эпир пире пурне те савăнтаракан тата хаяхлантаракан хыпар илтĕмĕр: Н. чăçăн обозĕнчен тата çав чăçăн уйăм трупписемпе пĕчченшер боецсенчен тăракан отряд çапăçса пырса, хупăрласа илнĕ çĕртен тухнă. Çав юлташсем нимĕçсем хупăрласа илнĕ çĕре лекнĕ. Часть штабĕн работникĕ Крылова юлташ обозсен командованине хăй çине илнĕ. Çул çинче пĕчченшер боецсемпе командирсене хăй сумне пĕрлештернĕ. Çак пĕрлешсе пухăннă отряд Крылова юлташ командир пулса ертсе пынипе нимĕçсен подразделенине арканса тăхнă. Çапăçура вирĕ автомат, винтовкăсем, патронсем тытса илнĕ. Крылова юлташăн çапăçури ĕçĕ ытти сийĕнчен пример пулса тăма, пирĕн фронтовиксене хавхалантарма пултарать.

Халĕ кăна Н-ски полкра юлашки кунсенче боецсемпе командирсем 120 çын ăйсене Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партин ретне илме ыйтса заявлени пани çинчен хыпар илнĕ.

Юлашки кунсенче полк противникăн танксемпе тунă атакисене ăнăçлăн сирсе ярса, темиçе хутчен хаярăн çапăçнă. Тăван çĕршывăн, тăван Мускавăн çапăçнă çĕрте пирĕн çынсем çирĕпленеççĕ тата ӳсеççĕ. Вĕсем Ленин—Сталин партийĕн ретне кĕреççĕ. Çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă хаяр кунсенче фашизма хирĕç паттăрăн кĕрешекен боецсем ĕнтĕ коммунистсем пулса тăраççĕ. Çак фактсем нумайăн çинчен каласçĕ. Вĕсем пирĕн вăй тата, халĕ тем пек ывăр пулсан та, çапах çĕнтерӳ пирĕнте пуласси çинчен питех те ӳçăн каласа параççĕ.

В. СТАВСКИЙ.

(«Правда», октябрĕн 27-мĕш).

Кăнтăр енче

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче ĕнер ирхине нимĕçсен икĕ чăçĕ К. юханшывĕ урлă кăсса Хĕвелтухăçнелле куçса пыма пуçланă. Вăйлă çапăçусем хыççăн противник халăх пурăнакан З. пункта тата электростанцине йышăнса илнĕ. Фронтăн çак участокне хӳтлекен пирĕн войскăсен чăçĕсене çăхнашкал приказ пенă пулнă: фашистсене К. юханшывĕн тепĕр çыранĕ енне хăваласа ямалла. Контрнаступлени тума ударлă группа вырăнне Елунин майорăн чăçне янă пулнă. Совет боецĕсем паттăрăн тата хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă. Кунĕпех вăйлă çапăçусем пынă. Çак районри чугунçул станцийĕ виçĕ хутчен алăран алла куçнă. Пирĕн хĕрлĕ воинсем вăйлăн хĕссе пынине фашистсем чăтса тăрайман, пулемечĕсене, миномечĕсене, винтовкисемпе боеприпасĕсене пăрахса хăварса каялла чакнă. Çавăн хыççăн фашистсен командованийĕ хăйсен чăçĕсене валли пополнени ярса панă. Фашистсен çĕнĕ войскисем автомашинăсем çине ларса пынă. Н-ски стрелковăй чăçăн артиллеричĕсем тăшмана резервсем ярса тăрассине чарса лартнă. Артиллеристсем тĕл персе фашистсен пехоти ларса пыракан 25 машинине пĕтерсе тăкнă. Каç пулнă çĕре пирĕн чăссем çав районран фашистсене хăваласа кăларса янă, кайран электростанцине йышăнса илнĕ. Тарма тытăннă фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене совет боецĕсем автоматсенчен персе ним шеллемесĕр вĕлере-вĕлере тăкнă. Çак çапăçура Елунин майорăн чăçĕ фашистсен пехотине икĕ полка яхăн çапса салатнă. Фронтăн участокĕнче лару-тăру çăхăн ыççăн малтанхи пекех пулса тăнă.

Летчиксен паттăрлăхĕ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Летчиксем Бугаенкопа Писанко юлташсем паян С. тата А. районĕсенче тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă танкĕсемпе мотопехотине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн штурмовиксем умлăн-хыçлăн пĕрин хыççăн тепри вĕрсе пырса тăшмана чылай сиен кӳнĕ. В. пунктĕ патне пымалли çулсем патĕнче нимĕçсен куçса пыракан колоннисем çине харăсăн тата вăйлăн пырса çапнă. Лейтенант Невкипелый летчиксен группипе пĕрле пулса пĕр вăйлăмра фашистсен пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисене атакăланă. Штурмовиксем çинчен вăйлăн персе тăшман пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем тапăннине пула паян противникăн 50 танкне, 200 автомашинине, артиллерин 6 установкине тата икĕ полка яхăн пехотине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн истребительсем фашистсен 19 самолетне персе ӳкернĕ.

Мало-Ярославец енчи çапăçусем

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, октябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Юлашки кунсем хушшинче противник Мускав патне кăнтăр енчен пыракан çулсем çинче хăйĕн активлăхне вăйлатнă. С. хули патне пырас шутпа вăл пехотăпа кавалерин пĕтĕк подразделенийĕсене кунĕн-çĕрĕн çапăçăва хăвалать. Тăшман С. хули патне пыма хăтланнисене пирĕн войскăсем вăйлă отпор параççĕ. Фашистсен пехотин автоматсемпе тата минометсемпе хĕçпăшалланнă батальонне хирĕç Коротков юлташăн боецĕсем тухнă. Н-ски чăсне пĕр шухăшлă пулса кĕрешсе, Коротков юлташăн боецĕсем çав батальона пĕр фашист юлмичĕн пĕтерсе тăкнă.

Павел Фирсов ертсе пыракан боецсен группи тăшман колонни çине хăюллăн тапăнни çинчен çак кунсенче «Правда» хаçатра пĕлтернĕччĕ. Икĕ кун каялла Павел Фирсов тата тепĕр çĕнĕ пуçарулăх кăтартнă. Вăл разведчиксенчен çичĕ группа организациленĕ. Çаксем вĕсем—пысăк мар, анчах та лайăх хĕçпăшалланнă тата пит лайăх çӳреме пултаракан боецсемпе командирсен групписем. Халь эпир Фирсов юлташăн разведчиквĕсен ăнăçлă вĕçĕсем çинчен пирвайхи даннăйсене илтĕмĕр. С. юлташ ертсе пыракан 10 çынран тăракан группа пирĕн оборона линийĕ патне тăшманăн икĕ эскадронĕ куçса пынине асăрханă. Разведчиксем вăрманта засада тунă та, фашистсен юланутçисем сывхарса çитсен, автоматсенчен вăйлăн пеме тытăннă. Фашистсен эскадронĕсем хăраса ӳкнипе пăтрашса кайнă. Татах тепĕр хут вăйлă залп парсан нимĕçсем васкасах каялла тарнă. Противник тылĕнче çапăçса, Фирсов командирăн разведчиквĕсем боеприпассен склачĕсене вут тĕртсе çунтараççĕ, патрульсене пĕтереççĕ, «чĕлхесем» тупаççĕ.

Харьковшăн пыракан çапăçусем

КАНТАР-ХЕВЕЛАНАÇ ЕНĔ, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Харьков патне пымалли вырăнсенче вăйлăн хирĕç тăнине тĕл пулнă хыççăн, нимĕçсен фашистла командованийĕ унта çĕнĕ дивизисем илсе килнĕ, çавна пула вĕсен наступлени пуçлама май пулнă. Пирĕн чăссем кăштах чакнă. Харьков районĕнче халĕ çапăçусем пыраççĕ. Хула хăрушлăх умĕнче тăрать. Тăшман хĕссе пырассине пĕрмаях вăйлатать, анчах та пур çĕрте те пирĕн вăйлă оборона çине пырса тăрăнать. Н-ски часть фашистсен танксем ярса вăйлатнă дивизийĕн атакисене вирĕ кун хушши ĕнтĕ пĕр вĕçĕмех сире-сире пăрахать. Çав чăçăн укрепленийĕсем çине противник вуншар хутчен те атакăласа пăхнă ĕнтĕ. Анчах та пирĕн часть хăюллă контратакăсем тунине пула тăшмана кашни хутĕнчех каялла хăвала-хăвала янă. Н-ски часть кирлĕ рубежа хӳтлесе тăрас тĕлĕшпе панă задачăна пурнăçа кĕртнĕ хыççăн соединени командирĕн приказĕ тăрăх каялла чакнă. Харьковшăн пыракан çапăçусенче нимĕçсем çавтери пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Уйăр виле куписемпе, ванса пĕтнĕ танксемпе тата автомашинăсемпе витĕннĕ. Харьков сывăхĕнчи вырăнсенче пĕр кун хушшинчех тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 3.500 çынна яхăн вилнĕ.

Обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççĕ

ВĂРНАР. Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан заводри рабочисемпе работницăсем чĕнсе каланине ответлесе, «Труд» артель коллективĕ хăй çине татăклă обязательствăсем илнĕ пулнă. Илнĕ обязательствăсене вăл вăрçă вăхăтне тивĕçлипе, хăвăрт пурнăçласа пырать. Артельре стахановецсен йышĕ ӳссех пырать. Артелĕн Пăртаскра ĕçлекен бригади (бригадирĕ Писарев юлташ) октябрь уйăхĕнчи плана срокчен 100 процентчĕлех тултарнă.

Çунасем тăвакан цехра ĕçлекен каçни рабочин уйăхра 10-шар çуна тумалла. А. Горбуновпа А. Сысунщикин юлташсем октябрĕн 20-мĕш тĕлнех, пысăк пахалăхпа ĕçлесе, 7-шер çуна туса пĕтернĕ. Çакăн пекех, М. Бурнаевпа Т. Рыжов рабочисем те ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Катка-пичке цехĕнчи рабочисем Федор тата Матвей Манякинсемпе А. Филяпов юлташсем çак уйăхри производствăллă планран чылаях иртерсе продукци туса кăларнă.

Машинно-тракторнăй станцинчи трактористсем те нумайĕшĕ нихăçан пулман хăвăртлăхсемпе ĕçлеççĕ. И. Карпалов çулталăкри производствăллă плана 110 процент, В. Качанова—136 процент, И. Прокьюмин — 130 процент, А. Макаров — 156 процент, Ф. Игнатьев — 170 процент, М. Ильина — 137 процент тултарнă. Трактористсем горючисене перекетлесе хăварассишĕн кĕрешеççĕ. Комсомолка-трактористка Мария Ильина юлташ, «У-2» тракторпа ĕçлесе, 372 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

В. МАКСИМОВ.

ИДЕН ВЫСТУПЛЕНИИЕ

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, юг-çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден Манчестерта октябрĕн 25-мĕшĕнче сăмах тухса каласа, вăрçă пуçланнăранпа иртнĕ икĕ çул хушшинчи событисене анализ туса панă. Гитлерла Германия Совет Союзĕ çине ултавлă майпа тапăнни çинче чарăнса тăрса, Иден çапла каланă: «Вырăс халăхĕ, унăн çарĕпе сывлăш-çар флочĕ тăшмана хирĕç çавтери геройла çапăçни пире кашнинех питĕ хĕпĕртеттерет. Кĕрешĕвĕн мĕнпур йывăрлăхне хальхи вăхăтра вырăссем хăйсем çине илсе тӳссе иртернине эпир питĕ те лайăх пĕлсе тăратпăр. Россипăна пулăшмашкăн вăй çитнĕ таран правительство пурне те туса тырать тата малашне те туса тырĕ тесе эсир шанса тăма пултаратăр. Россия ĕçĕ вăл—пирĕн ĕç, унăн кĕрешĕвĕ вăл—пирĕн кĕрешӳ». Совет Союзне пур майпа та пулăшса пымашкăн Англи правительстви пĕтĕм вăйне хурĕ,—тесе каланă Иден.

Иранра юлашки вăхăтра пулса иртнĕ событисем çинче чарăнса тăрса, Иден çапла каланă: «Иранăн çĕнĕ правительстви пирĕнпе тата пирĕн вырăс союзникĕсемпе пĕр хăмăллă пурăнать. Çĕршывра реформăсем туса иртнĕ ирттермелли программăна вăл пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Иран правительствине эпир Россипăпа тата пирĕнпе союз тăвасси çинчен договор тума сĕнтĕмĕр. Иран правительстви пирĕн çак сĕнĕве, тĕпрен илсен, йышăнчĕ ĕнтĕ».

Оккупациленĕ çĕршывсенче нацистсем тискер ĕçсем туса иртнине çинчен сăмах тапратса, Иден çапла каланă: Гитлер хăйĕн тиранине çирĕплетес тесе Норвегире, Францире, Чехословакире, Югославире, Грецире тата ытти çĕршывсенче çынсене тискер майпа тата ним шеллемесĕр асаплантарса вĕлернисем вĕсем Гитлер вăйли çинчен мар, Гитлер вăйсăрли çинчен каласа параççĕ. Заложниксем пулма тытса хупни тата урăх çынсем тунă ĕçсемшĕн теприсене асаплантарса вĕлерни—çынна ахальтенех вĕлернине пĕлтерет. Гитлер влаçа предательство тата ултав урлă тытса илчĕ. Çавнашкал çынпа нимĕнле компромисс та пулма пултараймасть.

Де Голль генерал чĕнсе калани

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 25-мĕшĕнче де Голль генерал радио тăрăх мĕнпур французсене октябрĕн 31-мĕшĕнче 16 сехетре кирек мĕнле ĕçе те 5 минутăлăха чарса лартма чĕнсе каланă. Çав 5 минутăлăх забастовка нимĕçсем персе пăрахнă француз-заложниксен ячĕсене асăнас майпа пулса иртет. Хăй чĕнсе кала. нинче де Голль çапла пĕлтернĕ: «Француз-заложниксене пере-пере пăрахса, Гитлер Франции хăратса ӳкерĕтĕм тесе шухăшлать пулмалла. Анчах Франция хăй Гитлертан хăраманнине кăтартса парĕ. Çакна Франция пĕтĕм тĕнче умĕнче ти уçăмлă та витĕмлĕ майсемпе кăтартса парĕ. Çитес эрнекун октябрĕн 31-мĕшĕнче 16 сехетрен пуçласа 16 сехет те 5 минутăна çитиччен пĕтĕм çĕршывра кирек мĕнле ĕç те чарăнса харать. Çав 5 минута хушшинче мĕнпур французсем, хăйсем кирек ăçта пулсан та: шкулсенче, магазинсенче, учрежденисенче, уйăхрисенче, заводсенче, — пĕр хускану тумасăр чарăнса тăрĕç. Кирек мĕнле ĕç те чарăнса ларĕ. Урамсемпе иртсе пыракансем чарăнса тăрĕç. Никам та пĕр хускану та тумĕ. Çакă питех те пысăк забастовка тăшмана вăл пысăк хăрушлăх умĕнче тăнине ăнланса илме май парĕ. Французсем тăшмана тата ăна сутăнкă çынсене çурайманнине тата ылханнипе тăпах чарăнса тăрĕç. Мĕнпур Франци халăхĕ хăйĕн юнпа çирĕпленĕ тата пулас шанчăкпа хавхаланнă аслă тăвăлăхне кăтартса парĕ. Франци çĕршывĕ пĕр хăйне кăна пăхăнса тăнине французсем мĕнпурĕ те пĕрне-пĕри хирĕçлекен приказсем кăларни кăна пулнă. Ку приказсенче Антонеску апат-çимĕç тăратас ĕçе тĕл пулакан çитменлĕхсем çинчен васкавлă йĕркепе Антонескуна пĕлтерсе тăмалла.

Хаçатсем Антонеску магазинсене кĕрсе çӳрени çинчен пит те илĕртсе çырнă. Анчах Антонеску çӳревĕнчен ним усси те пулман, мĕнпурĕ те пĕрне-пĕри хирĕçлекен приказсем кăларни кăна пулнă. Ку приказсенче Антонеску апат-çимĕçе «перекетлеме» ӳкĕтлет, теприсенче хак хăпартакан торговецсемпе мĕнпур «кăмăлсăрринсене» юнаса илет. Румыни пичечĕ хăй те ирĕксĕрех йышăннă тăрăх, Бухареста тата ытти хуласене те продовольстви кӳрсе тăрасси кунсерен начарланса пырать, хаçсем ним чарăнми хăпарса пыраççĕ.

США-н государственнăй секретарь помощникĕ тухса калани

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). «Тулашри политикăн ассоциацийĕсен» пухăвĕнче сăмах тухса каласа, США-н государственнăй секретарь помощникĕ Эйксон çапла пĕлтернĕ: нацизм вăрçа тухма чĕнет, пирĕн тухас пулать, титлерла Германие çĕмĕрсе тăкма пулăшас пулать. Нацизм çĕнтерсен, США пурăнма пултараймасть,—тенĕ вăл—Этемлĕх малалла та вăйланса ӳссе пытăр тесен, нацистла тирание çĕр çинчен шăлса ывăтас пулать.

Германире тумтир çитмест

АНКАРА, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Германи халăхне продовольствипе промышленность таварĕсем парса тăрас ĕç ывăрланнăçемĕн ывăрланса пырать. Нимĕç хаçачĕсем çапла пĕлтереççĕ: çĕрмамăкĕнчен тата çăмран пусма таварсем тĕртме чĕртавар çук пирки, Германи правительстви карточкăсем тăрăх памалли тумтир нормине татах нумай чакарма йышăннă. Кашни гражданина 16 уйăхлăха 120 талонлă карточка параççĕ. Тумтир таврашĕ памалли норма икĕ хут чакать. Пальто илме 90 талон памалла, костюм илме—80 талон.

Çакă вăл чĕртавар, пуринчен ытла çĕрмамăкĕпе çăм çителĕксĕрринчен, çавăн пекех тата çар валли япала нумай кирлинчен килет.

Нимĕçсем хушшинче тиф сарăлать

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Кенигсбергран тата Балтикăри ытти портсенчен тавăрăнакан моряксем Хĕвелтухăç фронтĕнче госпитальсем, врачсем тата медикаментсем çитменни пирки нимĕçсем хушшинче тиф эпидемийĕ вăйланса пыни çинчен каласа параççĕ.

Румынире продовольстви çитмест

АНКАРА, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Румынири «Курентул» тата «Универсул» хаçатсем çырнă тăрăх, Бухарест валли апат-çимĕç тăратас ĕç октябрь пуçламăшĕнчен тытăнса каллех начарланă. Çакă вăл Румынири продовольствие татти-сыпписĕр Германие илсе кайнăран килет. Бухарестри рыноксенче çакай, çăмарта, сĕт-çу продукчĕсем пачах та çук. Хăшлĕр кунсенче пĕтĕм Бухаресчĕпе шыраçан та ниçта та çĕрулми тупса илме çук.

Чылай хаçатсем пур пек продуктсем те ытлашши хакланса кайни çинчен пĕлтереççĕ. Хаçатсем çирĕп хаксем тума ыйтаççĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕнче Антонеску Бухарестри хăшлĕр рыноксемпе магазинсенче пулнă. Вара вăл ятарласа уйăрăм комисси туни çинчен пĕлтернĕ. Ку комисси, Антонеску сăмахĕ тăрăх, апат-çимĕç тăратас ĕçре тĕл пулакан çитменлĕхсем çинчен васкавлă йĕркепе Антонескуна пĕлтерсе тăмалла.

Италири лару-тăру

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Кашни эрнере тухса тăракан «Форейн корреспондентс» пĕлтернĕ тăрăх, Сицилире юлашки вунă кун хушшинче аслă вырăн йышăнса тăнă çынсенчен чылайĕшне арестленĕ. Сицилире çывăх вăхăтрах Муссолини хирĕç восстани пулма пултарасси çинчен каласçĕ. Англичансене пулăшу панă тесе айăплакансем тĕлĕшпе тискер репрессисем йышăнаççĕ.

Римра пир-авăр сутма чарнă

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Римри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 1-мĕшĕнчен Римра пир-авăр тавраш-сене сутма чарса лартни çинчен пĕлтернĕ. Çĕршывра çунтармалли япаласем çук пирки промышленность производстви чылаях чакас хăрушлăх ӳçăнах тухса тăнă.

Чехословакири террор

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Иерусалимри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Чехословаки çыннисем хушшинче çӳрекен каласусем тăрăх, Гейдрих Богеми-пе Моравире хуçа пулса тăнă вирĕ ĕрне хушшинче 317 çынна асаплантарса вĕлернĕ тата 1.300 çынна арестленĕ.

Шолоховăн „Лăпкă Дон“ кĕнеки США-ра

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Америкăра тухса тăракан «Харперс мэгезин» ятлă журнал США-ра тĕрлĕ районсенче тухса тăракан хаçатсенче ĕçлекен чи палăк 20 критикран: США-ра кăçал июнь—сентябрь уйăхĕсенче кăларнă кĕнекесенчен вĕсем хăшне чи лайăхши тесе шутлаççĕ, тесе ыйтса пĕлнĕ. Çав 20 критикран вунпиллĕкĕш çапла ответ панă: эпир ун пек кĕнеке Шолоховăн «Лăпкă Донĕ» тесе шутлатпăр, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, промышленность пайĕсен — 0—88, сыруçемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5130

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 490. Ф. б. 58. 84 п. л.